ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНЕСЕН ТЕНЧЕРИ ТАТА ТУЛАШРИ ЭКОНОМИКА ÇЫХĂНĂВЕСЕНЕ ЙЕРКЕЛЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья. **Çак Саккун йĕркелекен ыйтусем**

Çак Саккун Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2003 çулхи юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 131-ФЗ №-лĕ саккунĕпе, Федерацин "Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче халăх влаçне йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2021 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 414-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен (малалла – вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем) тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлас енĕпе пулакан хутшăнăвĕсене йĕркелет.

2 статья. **Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе пурнăçлакан полномочийĕсем**

1. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем йĕркелес ĕçне саккунсем кăларса йĕркелесе пырассине пурнăçласси;

2) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе йышăннă Чăваш Республикин саккунĕсене пăхăннине тата вĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесси;

3) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе палăртнă ытти полномочисене пурнăçласси.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсене йышăнасси, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене вĕсем тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçланă чухне право, йĕркелӳ тата методика пулăшăвĕ парассине йĕркелесси;

2) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органне (малалла – полномочиллĕ орган) палăртасси;

3) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсем тăвас пирки килĕшсе татăласси;

4) Чăваш Республикин муниципаллă пĕрлĕхĕ (малалла – муниципаллă пĕрлĕх) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсен переченьне туса хатĕрлемелли йĕркене палăртасси;

5) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсен переченьне Чăваш Республикинче туса хатĕрлесси тата çавнашкал перечене федерацин ĕç тăвакан влаçĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе патшалăх политикине туса хатĕрлес тата пурнăçлас тата нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырас енĕпе ĕçлекен полномочиллĕ органне çулсерен ярса парасси;

6) федерацин ĕç тăвакан влаçĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе патшалăх политикине туса хатĕрлес тата пурнăçлас тата нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырас енĕпе ĕçлекен полномочиллĕ органне вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлани çинчен

тата çавнашкал çыхăнусене иртнĕ çулта пурнăçланин результачĕсем çинчен федераци органĕ палăртнă йĕркепе пĕлтересси;

7) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ытти полномочисене пурнăçласси.

3. Полномочиллĕ органăн полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене вĕсем тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçланă чухне право, йĕркелӳ тата методика пулăшăвĕ парасси;

2) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парас тĕллевпе тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлама палăртакан шухăшĕсем пирки килĕшсе татăласси;

3) муниципаллă пĕрлĕх пуçлăхĕн асăннă муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлани çинчен тата çавнашкал çыхăнусене иртнĕ çулта пурнăçланин результачĕсем çинчен полномочиллĕ органа çулсерен пĕлтерсе тăмалли йĕркене çирĕплетесси;

4) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсене регистрацилесси тата çавнашкал килĕшӳсен реестрне тытса пырасси;

5) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсен проекчĕсене пăхса тухасси;

6) муниципаллă пĕрлĕхсен пуçлăхĕсенчен илнĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсен переченьне Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне ярса парасси;

7) муниципаллă пĕрлĕхсен пуçлăхĕсенчен илнĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлани çинчен тата çавнашкал çыхăнусене иртнĕ çулта пурнăçланин результачĕсем çинчен калакан информацие Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне ярса парасси;

8) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе палăртнă ытти полномочисене пурнăçласси.

3 статья. **Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе пурнăçлакан полномочийĕсем**

1. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1) ют çĕршывсен патшалăх-территори, администраци-территори тата муниципаллă пĕрлĕхĕсен представителĕсемпе тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе тĕл пулусем, консультацисем тата ытти мероприятисем ирттересси;

2) ют çĕршывсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсене тăвасси;

3) муниципалитетсем хушшинче килĕштерсе ĕçлес сферăри тĕнчери организацисен ĕç-хĕлне çав тĕллевпе ятарласа йĕркеленĕ органсен полномочийĕсен шайĕнче хутшăнасси;

4) муниципалитетсем хушшинче килĕштерсе ĕçлемелли тĕнчери программăсен проекчĕсене туса хатĕрлеме тата пурнăçлама хутшăнасси;

5) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ытти полномочисене пурнăçласси.

2. Вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парас тĕллевпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене полномочиллĕ органпа килĕшсе татăлса пурнăçлаççĕ.

3. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ют çĕршывсен территорийĕнче хăйсен представительствисем пулмаççĕ тата вĕсем хăйсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене ют çĕршывсен территорийĕсенче Чăваш Республикин представительствисен шайĕнче (вĕсем пур пулсан) кăна пурнăçласа пыраççĕ.

4 статья. **Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсем тăвас ĕç пирки килĕшсе татăлмалли йĕрке**

1. Вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парас тĕллевпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пур-

нăçласси çинчен калакан килĕшӳсене ют çĕршывсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе килĕшсе татăлнă тăрăх тăваççĕ.

2. Муниципаллă пĕрлĕх пуçлăхĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве алă пусма палăртакан кунччен 30 ĕç кунĕнчен кая юлмасăр вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳ проектне тата асăннă килĕшĕве тума кирлине çирĕплетсе парса тата килĕшӳ туни финанспа экономика тата ытти енчен мĕнлерех витĕм кӳме пултарасси çинчен калакан сведенисене кăтартса ăнлантару çырăвне (малалла тивĕçлĕн – килĕшӳ проекчĕ, ăнлантару çырăвĕ) полномочиллĕ органа ярса парать.

3. Енчен те вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве темиçе муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем алă пусма палăртаççĕ пулсан, килĕшӳ проектне тата ăнлантару çырăвне полномочиллĕ органа асăннă килĕшĕве алă пусакансен йышĕнче пĕрремĕш вырăнта тăракан вырăнти хăй тытăмлăх органĕ çак статьян 2-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă срокра тăратать.

4. Полномочиллĕ орган килĕшӳ проектне тата ăнлантару çырăвне илнĕ кунран пуçласа виçĕ ĕç кунĕ хушшинче вĕсене пăхса тухать, çав хушăра вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве тума кирлине çирĕплетсе панине хак парать тата килĕшӳ проекчĕпе ăнлантару çырăвне вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳ тĕллевĕпе çыхăннă ыйтусем вĕсен компетенцине кĕрекен Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсене (малалла – Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем) асăннă килĕшĕве туни Чăваш Республикишĕн финанспа экономика тата ытти енчен мĕнлерех витĕм кӳрессине хак пама ярса парать.

5. Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем килĕшӳ проектне тата ăнлантару çырăвне илнĕ кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕ хушшинче вĕсене пăхса тухаççĕ, вĕсен пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх полномочиллĕ органа килĕшӳ проектне килĕштерни çинчен е ун тĕлĕшпе асăрхаттарусем тата (е) сĕнӳсем пулнине кăтартса çыру ярса параççĕ.

6. Килĕшӳ проекчĕ тĕлĕшпе Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен, полномочиллĕ органăн асăрхаттарусем тата (е) сĕнӳсем çук пулсан полномо-

чиллĕ орган Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсенчен килĕшӳ проектне килĕштерни çинчен калакан çырусене илнĕ кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕ хушшинче Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне килĕшӳ проектне тата ăна килĕштерни çинчен калакан çырăва ярса парать.

7. Килĕшӳ проекчĕ тĕлĕшпе Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен, полномочиллĕ органăн асăрхаттарусем тата (е) сĕнӳсем пур пулсан полномочиллĕ орган Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсенчен килнĕ çырусене илнĕ кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕ хушшинче асăннă асăрхаттарусене тата (е) сĕнӳсене муниципаллă пĕрлĕх пуçлăхне ярса парать.

8. Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсенчен, полномочиллĕ органран асăрхаттарусем тата (е) сĕнӳсем килсе çитнĕ кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕ хушшинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕ тивĕçлĕ улшăнусене килĕшӳ проектне кĕртет тата ăна полномочиллĕ органа тепĕр хут ярса парать.

9. Çĕнетсе хатĕрленĕ килĕшӳ проектне илнĕ кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕ хушшинче полномочиллĕ орган килĕшӳ проектне тата ăна килĕштерни çинчен калакан çырăва вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве тăвас ĕçе килĕштерме Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне ярса парать.

10. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ полномочиллĕ орган килĕшӳ проектне тата ăна килĕштерни çинчен калакан çырăва тăратнă кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕ хушшинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳ проектне килĕштересси çинчен е тата ăна килĕштерме хирĕç пулни çинчен калакан йышăнăва тăвать.

11. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве килĕштерме хирĕç пулнă чухне çак статьян 12-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă сăлтавсене кăтартса вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве килĕштерни çинчен е тата килĕштерме хирĕç пулни çинчен калакан йышăнăва тунă кун хыççăн пĕр ĕç кунĕ хушшинче муниципаллă пĕрлĕх пуçлăхне пĕлтерет.

12. Вырăнти хăй тытăмлăх органне вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен кала-

кан килĕшĕве тăвас ĕçе килĕштерме хирĕç пулни çинчен калакан йышăнăва çакăн чухне тăваççĕ:

1) вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳ енĕ Раççей Федерацийĕ, Раççей Федерацийĕн гражданĕсем е Раççейри юридически сăпатсем тĕлĕшпе тăшманла ĕçсем тăвакан ют çĕршывăн вырăнти хăй тытăмлăх органĕ шутлансан;

2) килĕшӳ проекчĕ Раççей Федерацийĕн Конституцине, пурте йышăннă йĕркесене тата пĕтĕм тĕнчери право нормисене, Раççей Федерацийĕн тĕнчери килĕшĕвĕсене, Раççей Федерацийĕн саккунĕсене, Чăваш Республикин Конституцине, Чăваш Республикин саккунĕсене, муниципаллă пĕрлĕх уставне хирĕçленине тупса палăртсан;

3) вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳ вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса пама пулăшмасть пулсан.

13. Муниципаллă пĕрлĕх пуçлăхĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве тăвас ĕçе килĕштерме вырăнти хăй тытăмлăх органне çак статьян 12-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн хирĕç пулмалли йышăну тума хистенĕ сăлтавсене сирнĕ хыççăн пилĕк ĕç кунĕ хушшинче килĕшӳ проектне пăхса тухма тата ăна çак статьяпа палăртнă йĕркепе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе килĕштерме полномочиллĕ органа тепĕр хут ярса пама пултарать.

14. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕ хушшинче килĕшӳ проекчĕ тĕлĕшĕпе хирĕçӳлĕхсем палăрсан килĕшсе татăлмалли процедурăсемпе усă кураççĕ.

15. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе çавнашкал килĕшĕве тăвас ĕçе килĕштернĕ хыççăн килĕшӳ проектне улшăнусем кĕртнĕ чухне килĕшӳ проектне çак статьяпа пăхса хăварнă йĕркепе тепĕр хут килĕштермелле.

16. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве тăвас ĕçе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе килĕштернĕ хыççăн вырăнти хăй тытăмлăх органĕ ют çĕршывăн вырăнти хăй тытăмлăх органĕпе асăннă килĕшĕве алă пусмалли куна тата йĕркене палăртас тĕлĕшпе калаçусем ирттерет.

17. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве кĕртекен улшăнусемпе хушăмсене çак статьяпа пăхса хăварнă йĕркепе килĕштермелле.

18. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсене вĕсене алă пусса çирĕплетнĕ хыççăн çак Саккунăн 6 статйипе палăртнă йĕркепе патшалăх регистрацийĕ тумалла.

5 статья. **Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлас ĕçне полномочиллĕ органпа килĕшсе татăлмалли йĕрке**

1. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем полномочиллĕ органа çакăн çинчен пĕлтереççĕ:

1) тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе ют çĕршывсен патшалăх-территори, администраци-территори тата муниципаллă пĕрлĕхĕсен представителĕсемпе тĕл пулусем, консультацисем тата ытти мероприятисем ирттерме шутлани çинчен;

2) муниципалитетсем хушшинче килĕштерсе ĕçлес сферăри тĕнчери организацисен ĕç-хĕлне хутшăнма шутлани çинчен;

3) муниципалитетсем хушшинче килĕштерсе ĕçлемелли тĕнчери программăсен проекчĕсене туса хатĕрлеме тата пурнăçлама хутшăнма шутлани çинчен.

2. Çак статьян 1-мĕш пайĕнче кăтартнă тĕнчери мероприятисенчен пĕрне ирттерме (тĕнчери мероприятисенчен пĕрне хутшăнма) шутлани çинчен пĕлтернине (малалла – пĕлтерни, тĕнчери мероприяти) вырăнти хăй тытăмлăх органĕ полномочиллĕ органа ирĕклĕ майпа çырса хатĕрлесе ярса парать.

3. Тĕнчери мероприятие ирттерме (тĕнчери мероприятие хутшăнма) шутлани çинчен вырăнти хăй тытăмлăх органĕ полномочиллĕ органа ăна ют çĕршыв территорийĕнче ирттерме палăртакан кунччен 45 календарлă кунран маларах тата ăна Раççей Федерацийĕн территорийĕнче ирттерме палăртакан кунччен 15 кунран маларах пĕлтерет (вырăнти хăй тытăмлăх органне ют патшалăхран тĕнчери мероприятине ирттересси çинчен калакан çыру тĕнчери мероприятине ирттермелли кунччен 15 календарлă кунран кая юлмасăр килсе çитнĕ чухне тĕнчери мероприятине ирттересси çинчен пĕлтернине ăна илнĕ кунран пуçласа пĕр ĕç кунĕ хушшинче полномочиллĕ органа ярса параççĕ).

4. Пĕлтернинче çак информацие кăтартмалла:

1) çак статьян 1-мĕш пайĕн 1-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă тĕнчери мероприяти тĕлĕшпе:

а) тĕнчери мероприятие ирттерме палăртса хунă куна тата вырăнне;

ă) тĕнчери мероприяти тематикине (ятне);

б) тĕнчери мероприятие ирттернин тĕллевне;

в) тĕнчери мероприяти программине;

г) тĕнчери мероприятие ирттерес ĕç пуçаруçи çинчен калакан сведенисене;

д) тĕнчери мероприятие хутшăнакан çынсен – Раççей Федерацийĕн тата ют çĕршыв представителĕсен списокне;

е) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен представителĕсен ют çĕршыври визит программине (тĕнчери мероприятие ют çĕршыв территорийĕнче ирттернĕ чухне);

2) çак статьян 1-мĕш пайĕн 2-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă тĕнчери мероприяти тĕлĕшпе:

а) тĕнчери мероприятие ирттерме палăртса хунă куна;

ă) тĕнчери мероприяти тематикине (ятне);

б) тĕнчери организаци ятне;

в) тĕнчери организацин уставпа пăхнă ĕç-хĕлĕ çинчен калакан сведенисене;

г) тĕнчери мероприятие хутшăнакан çынсен – Раççей Федерацийĕн тата ют çĕршыв представителĕсен списокне;

3) çак статьян 1-мĕш пайĕн 3-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă тĕнчери мероприяти тĕлĕшпе:

а) муниципалитетсем хушшинче килĕштерсе ĕçлемелли тĕнчери программа проекчĕн ятне;

ă) муниципалитетсем хушшинче килĕштерсе ĕçлемелли тĕнчери программа проекчĕн ют çĕршыври ĕçтешĕн ятне;

б) муниципалитетсем хушшинче килĕштерсе ĕçлемелли тĕнчери программа проекчĕн тĕллевĕсене, задачисене;

в) муниципалитетсем хушшинче килĕштерсе ĕçлемелли тĕнчери программа проектне пурнăçланă шайри тĕнчери тĕп мероприятисене;

г) муниципалитетсем хушшинче килĕштерсе ĕçлемелли тĕнчери программа проектне пурнăçланинчен кĕтекен результатсене.

5. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕн представителĕ ют çĕршыв территорийĕнче ирттерекен тĕнчери мероприятисене хутшăннă чухне пĕлтерни çумне пĕтĕм тĕнчери мероприятие хутшăнма ют çĕршывран ярса панă йыхрав хучĕн копине хушса хумалла.

6. Полномочиллĕ орган пĕлтернине илнĕ кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕ хушшинче, вырăнти хăй тытăмлăх органне ют патшалăхран тĕнчери мероприятине ирттересси çинчен калакан çыру тĕнчери мероприятине ирттермелли кунччен 15 календарлă кунран кая юлмасăр килсе çитнĕ чухне пĕлтернине илнĕ кунран пуçласа икĕ ĕç кунĕ хушшинче пăхса тухать тата çак йышăнусенчен пĕрне тăвать:

1) вырăнти хăй тытăмлăх органне тĕнчери мероприятие ирттерме (тĕнчери мероприятие хутшăнма) килĕшес;

2) вырăнти хăй тытăмлăх органне тĕнчери мероприятие ирттерме (тĕнчери мероприятине хутшăнма) килĕшес мар.

7. Вырăнти хăй тытăмлăх органне тĕнчери мероприятие ирттерме (тĕнчери мероприятине хутшăнма) килĕшменни çинчен калакан йышăнăва пĕлтерни çак статьян 4-мĕш пайĕпе палăртнă требованисене тивĕçтермен чухне тăваççĕ.

8. Полномочиллĕ орган вырăнти хăй тытăмлăх органне тĕнчери мероприятие ирттерме (тĕнчери мероприятие хутшăнма) килĕшни çинчен е тата ăна ирттерме килĕшменни çинчен калакан йышăнăва çирĕплетнĕ кун хыççăнхи ĕç кунĕнчен кая юлмасăр вырăнти хăй тытăмлăхăн тивĕçлĕ органне ярса параççĕ.

9. Çак статьян 7-мĕш пайĕнче кăтартнă асăрхаттарусене сирнĕ хыççăн пĕлтернине полномочиллĕ органа тепĕр хут ярса пама пултараççĕ.

10. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тĕнчери мероприяти вĕçленнĕ кун хыççăн пилĕк ĕç кунĕнчен кая юлмасăр вăл иртнĕ чăн вăхăта, ăна ирттернĕ вырăна, тĕнчери мероприяти программине тата унта хутшăннă çынсене, тĕл пулусен, килĕшсе татăлнă ĕççен содержанине тата результачĕсене кăтартса тунă отчета, çавăн пекех çав мероприяти вăхăтĕнче алă пуснă документсен копийĕсене полномочиллĕ органа ярса параççĕ.

6 статья. **Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсене регистрацилемелли йĕрке**

1. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн тунă вырăнти

хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсене регистраци тумалла.

2. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсене Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн регистрацилес ĕçе полномочиллĕ орган пурнăçлать тата çакă çавнашкал килĕшӳсем вăя кĕмелли çирĕплетнĕ йĕркепе палăртнă услови пулса тăрать.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан алă пуснă килĕшĕвĕн килĕшӳ çумне хунă пĕтĕм хушса çырнисемлĕ тĕп экземплярне тата çав документсен икĕ копине, вĕсене муниципаллă пĕрлĕх пуçлăхĕ е вăл полномочи панă çын çирĕплетсе панă, асăннă килĕшĕве алă пуснă кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕнчен кая юлмасăр полномочиллĕ органа регистраци тума тăратаççĕ. Регистрацилес ĕçе вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве номер парса тата регистрациленĕ куна кăтартса тăваççĕ.

4. Полномочиллĕ орган вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве илнĕ кунран пуçласа асăннă килĕшĕве регистрацилет тата ăна регистрациленĕ хыççăн пилĕк ĕç кунĕ хушшинче муниципаллă пĕрлĕх пуçлăхне (вăл вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве регистрацилеме тăратнă) ярса парать.

5. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе килĕштермен пулсан полномочиллĕ орган ăна регистрацилеме килĕшмест.

6. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан регистрацилеме килĕшмен килĕшĕве полномочиллĕ орган асăннă йышăнăва тунă кунран пуçласа пилĕк ĕç кунĕ хушшинче ăна тăратнă муниципаллă пĕрлĕх пуçлăхне регистрацилеме килĕшменнин сăлтавĕсене кăтартса ярса парать.

7. Енчен те вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве темиçе муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тунă пулсан, асăннă

килĕшĕвĕн регистраци тумалли чăн экземплярне, çав шутра ун çумне хунă пĕтĕм хушса çырнисене алă пуснисен йышĕнче пĕрремĕш вырăнта тăракан вырăнти хăй тытăмлăх органĕ полномочиллĕ органа çак статьян 3-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă вăхăтра тăратать.

8. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве кĕртекен улшăнусемпе тӳрлетӳсене, çавăн пекех ун çумне хунă пĕтĕм хушса çырнисене çак статьяпа çирĕплетнĕ йĕркепе регистрацилемелле.

7 статья. **Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсене пичетлесе кăларасси**

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан алă пуснă килĕшӳсене муниципаллă право акчĕсене пичетлесе кăларма (халăха пĕлтерме) палăртнă йĕркепе пичетлесе кăлармалла (халăха пĕлтермелле).

8 статья. **Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсен переченĕ**

1. Муниципаллă пĕрлĕх асăннă муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсен переченьне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртнă йĕркепе туса хатĕрлет. Çав перечене асăннă муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлани çинчен калакан мĕнпур килĕшĕве, çав шутра хăйсен вăйне çухатнă килĕшӳсене, кĕртеççĕ.

2. Муниципаллă пĕрлĕхĕн пуçлăхĕ асăннă муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсен, çав шутра иртнĕ çулта тунă тата хăйсен вăйне çухатнă килĕшӳсен, переченьне полномочиллĕ органа çулсерен кăрлач уйăхĕн 15-мĕшĕччен ярса парать. Енчен те çавнашкал перечене пĕрремĕш хут ярса параççĕ пулсан, унта асăннă муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлани çинчен калакан мĕнпур килĕшĕве, çав шутра хăйсен вăйне çухатнă килĕшӳсене, кĕртеççĕ.

3. Полномочиллĕ орган çулсерен кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕччен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсен переченьне Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне ярса парать.

4. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, çак статьяпа пăхса хăварнă переченьсене тĕпе хурса, Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсен переченьне йĕркелет тата çулсерен нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕччен çавнашкал перечене федерацин ĕç тăвакан влаçĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе патшалăх политикине туса хатĕрлес тата пурнăçлас тата нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырас енĕпе ĕçлекен полномочиллĕ органне ярса парать.

9 статья. **Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлани çинчен пĕлтерсе тăрасси**

1. Муниципаллă пĕрлĕх пуçлăхĕ асăннă муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлас ĕçĕ çинчен полномочиллĕ органа асăннă муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлани çинчен тата çавнашкал çыхăнусене иртнĕ çулта пурнăçланин результачĕсем çинчен çулсерен кăрлач уйăхĕн 15-мĕшĕччен асăннă орган палăртнă йĕркепе пĕлтерет.

2. Полномочиллĕ орган вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлас ĕçĕ çинчен тата çавнашкал çыхăнусене иртнĕ çулта пурнăçланин результачĕсем çинчен Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне çулсерен кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕччен пĕлтерет.

3. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçлас ĕçĕ çинчен тата тата çавнашкал çыхăнусене иртнĕ çулта пурнăçланин результачĕсем çинчен федерацин ĕç тăвакан влаçĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсем енĕпе патшалăх политикине туса хатĕрлес тата пурнăслас тата нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырас енĕпе ĕçлекен полномочиллĕ органне çулсерен нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕччен

вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен федерацин асăннă органĕ палăртнă йĕркепе пĕлтерет.

10 статья. **Çак Саккун вăя кĕресси**

1. Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 6 тата 7 статйисен положенийĕсемпе Федерацин "Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" саккунне тата Федерацин "Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче халăх влаçне йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" саккунĕн 44 статйине улшăнусем кĕртесси çинчен" 2023 çулхи çурла уйăхĕн 4-мĕшĕнчи 420-ФЗ №-лĕ саккунĕ вăя кĕнĕ кунччен тунă вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене пурнăçласси çинчен калакан килĕшӳсем тĕлĕшпе усă курмаççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çу уйăхĕн 21-мĕшĕ
33 №